Ҫӗр ӗҫченӗн ҫулталӑкӗ

# «Хисеп палли» орден кавалерӗ

Патшалӑх Канашне янӑ Сырура ЧР Президенчӗ Н. Федоров ҫакна палӑртнӑччӗ: «Ял хуҫалӑхӗ экономика кӑна мар, вӑл пурнӑҫӑн йӑлана кӗнӗ йӗркин сайра хаклӑхӗсене упраса хӑварни, апла пулсан, пурнӑҫ йӗркине, наци культурине тата сывлӑхне, эппин, нацие хӑйне те сыхласа хӑварни. Шӑпах ҫакна шута илсе эпӗ 2009 ҫула Ҫӗр ӗҫченӗн ҫулталӑкӗ тесе пӗлтертӗм».

Президент сӑмахӗсене вулана май ҫакӑн пек ӳкерчӗк курӑнса, пысӑкланса пычӗ. Темӗнле кӑткӑс лару-тӑрура та пулма тивӗ Суворов ячӗпе хисепленекен ял хуҫалӑх производство кооперативӗн. Ҫапах та пуҫ усмарӗҫ Анаткассисем, йывӑрлӑхсем пирки макӑрса хуҫӑлмарӗҫ. Ума лартнӑ тӗллевсене пурнӑҫлассипе тимлӗрех пулма пуҫларӗҫ кӑна.



Ҫӗр-аннемӗр сӗткенӗпе ӳснӗ, хресчен туйӑмӗпе тулнӑ ҫыншӑн тӑван хуҫалӑх аталанӑвӗнчен пахараххи ҫук та пулӗ. Ҫакна хамӑр хуҫалӑх тӗслӗхӗпе ҫирӗплетме пулать. Кӑҫал Анаткассисемпе Ҫатракассисем ҫанталӑк условийӗсене пӑхмасӑрах уй-хиртен тухӑҫ сахал мар илчӗҫ. Тӗш тырӑпа пӑрҫа йышши культурӑсене кӑна хуҫалӑх 3335 тонна пухса кӗртрӗ. Гектар пуҫне тивекен вӑтам тухӑҫ 28,6 центнер. Ҫакӑ ӑнсӑртран пулнӑ ӗҫ мар.

Хуҫалӑх ертӳҫи В.С. Андреев тата тӗп агроном Г.Н. Албутова ӗҫсене йӗркелеме пӗлнипе палӑрса тӑраҫҫӗ. Вӗсенчен вӗренмелли те чылай. Пахалӑхлӑ сортсемпе вырӑнлӑ усӑ курсан, агротехникӑна ҫирӗп пӑхӑнса пырсан, ӳсен-тӑрана хӳтӗлемелли имҫамсемпе виҫеллӗ ӗҫлесен тухӑҫлӑ тыр-пул ҫитӗнтерме пулатех.

Кирек хӑш ӗҫре те этем факторӗ пирки нумай калаҫаҫҫӗ. Производство ҫине ырӑ витӗм кӳрекенсем Суворов яч. хис. хуҫалӑхра та сахал мар. Тӗслӗхрен, Юрий Гордянович Орлов, Федор Петрович Журавлев, Николай Витальевич Ивашкин, Евстафий Алексеевич Филиппов механизаторсем йывӑрлӑхсенчен хӑрамасӑр хӑйсен ӗҫне тивӗҫлипе пурнӑҫласа пыраҫҫӗ.

Акӑ Радонеж Виссарионович Кузнецов кӑҫал 1617 тонна тырӑ-пулӑ ҫапса тӗшӗлерӗ. Ҫак сӑпайлӑ та ӗҫчен механизатор нихӑҫан та калаҫура малта пулассишӗн тӑрӑшмасть, ӗҫре вара никама та маххӑ памасть. Унашкал хастар ӗҫченсем хуҫалӑхра татах та пур. Ҫак ырӑ йӑла-йӗрке хуҫалӑхра ламран-лама куҫса пырать.

Илер-ха Николай Михайлович Казакова. Вӑл – Тушкасси ялӗн пултаруллӑ ывӑлӗ, ӗҫе юратса та чунне парса пурнӑҫланине ялти кашни ҫын пӗлет. Суйланӑ професси пирки ыйтсан акӑ еплерех шӳтлесе ҫавӑрттарса хучӗ вӑл: «Ҫамрӑк чух сывӑрас килменнипе ҫӗр ӗҫне суйларӑм. Халӗ вара вӑл ҫулсемӗн те канатӑп». Анчах канма халӗ те канаймасть Николай Михайлович. Мӑшӑрӗпе, Анна Егоровнапа, кунӗпех кил-ҫурт таврашӗнчи ӗҫсемпе аппаланаҫҫӗ: пахчара ӗҫлеҫҫӗ, выльӑх-чӗрлӗх пӑхаҫҫӗ т. ыт. те. Николай Михайлович, ҫулӗсем пуррине пӑхмасӑрах, тӑван хуҫалӑх ӗҫӗпе интересленсех тӑрать, хаҫат-журналсемпе туслӑ ҫыхӑну тытать.

Калама ҫеҫ ҫӑмӑл, Н. Казаковӑн тӑван колхоз уй-хирӗнчи ӗҫ-хӗлӗ 7 класс хыҫҫӑнах пуҫланнӑ. Салтака кайса килсен те тӑван хуҫалӑхран пӑрӑнман вӑл. Мӗн тивӗҫлӗ канӑва тухиччен ДТ-75 тракторпа ӗҫлерӗ. Ӗҫри маттурлӑхшӑн ӑна медальсемпе, ӑмӑрту ҫӗнтерӳҫин паллисемпе сахал мар чысланӑ. 1981 ҫулта вара Николай Михайловича ҫӗршыв «Хисеп палли» орденпа чысларӗ.

Ҫавнашкал ҫӗр ӗҫченӗсенчен вӑй илеҫҫӗ те пулӗ паянхи ҫамрӑксем. Вӗсемшӗн аслӑ ӑрури ӗҫченсен паттӑрлӑхӗ яланах тӗслӗх вырӑнӗнче.

Ӳсӗм хӑй тӗллӗн килмест. Хушнӑ ӗҫшӗн яваплӑха туйни, пуҫарулӑх кӑтартни, мӗн тунипе ҫырлахса пурӑнманни – акӑ вӑл малашлӑх ҫӑл куҫӗ. Ҫав малашлӑхалла утнӑ чух пирӗн Суворов ячӗпе хисепленекен ял хуҫалӑх производство кооперативӗн территорийӗнче пурӑнакан ӗҫ ветеранӗ Николай Михайлович Казаков пек маттурсенчен вӗренмелли чылай. Вӗсен ятне манманни те пире ҫӗнӗлӗхсене алла илсе мал туртӑмлӑрах ӗҫлеме хистет.

**Г. АНДРЕЕВА,**
**Анаткассинчи ял библиотекарӗ.**

Продукци тирпейлессе тивӗҫлӗ шайра

# Яваплӑха туйни кашни утӑмра

Муркаш ял тӑрӑхӗнчи Ҫурлатринчи Пушкинсем хресчен (фермер) хуҫалӑхне йӗркеленӗренпе пӗрремӗш ҫул мар ӗнтӗ. Пӗрремӗш кунранах вӗсем продукци туса илнипе пӗрлех ӑна вырӑнтах тирпейлесси ҫине пысӑк тимлӗх уйӑрчӗҫ. Паян вара вӗсем – районта та, республикӑпа ун тулашӗнче те хӑйсен рынокне тупнӑ хуҫалӑх. Ҫакна хресчен (фермер) хуҫалӑхӗн тилхепине тытса пыракан В.И. Пушкин пытармасть те. Ҫав вӑхӑтрах вӑл тӑтӑш шыравра пулни те ялан куҫ умӗнче. Кӑҫалхи 9 уйӑхра кӑна асӑннӑ хресчен (фермер) хуҫалӑхӗ 289 центнер аш-какай туса илнӗ. Ҫакна валли вӗсен хӑйсен сысна ферми пур. Апла пулсан паянхи тата ыранхи уяв Пушкинсемшӗнех. Телей те ӑнӑҫу пултӑр сире малашне те!



**Сӑн ӳкерчӗкре эсир хресчен (фермер) хуҫалӑхӗн пуҫлӑхне В. Пушкина район администрацийӗн ял хуҫалӑх пайӗн тӗп специалист-эксперчӗ Т. Алексеева ӑнӑҫлӑ ӗҫшӗн кӑҫалхи пӗрремӗш ҫур ҫул кӑтартӑвӗсемпе район администрацийӗн Хисеп грамотипе наградӑланине куратӑр. Хресчен (фермер) хуҫалӑхӗ паян та ҫӳллӗ шайра ӗҫлесе пырать.**

**А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.**

Кам мӗнле ӗҫлет?

## Районти обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх пӑхакансен ӑмӑртӑвӗнче кӑҫалхи 9 уйӑхри ӗҫ кӑтартӑвӗсемпе малта пыракансем

### Ӗне сӑвассипе

**Колонкӑсенче: 1. Дояркӑсем. 2. Хуҫалӑхсем. 3. Кӑҫал пӗр ӗне пуҫне сунӑ. 4. Пӗлтӗрхи кӑтарту (килогрампа).**

| | | | |
|---|---|---|---|
| Орлова Н. Н. | Суворов яч. хис. | 5267 | 3791 |
| Михайлова Н. В. | Суворов яч. хис. | 5267 | 3780 |
| Андреева З. С. | «Ударник» | 4762 | 4818 |
| Анисимова С. В. | «Свобода» | 4676 | 3130 |
| Петрова М. Г. | «Свобода» | 4323 | 2904 |
| Кириллова Е. А. | «Свобода» | 4241 | 3367 |
| Майорова М. И. | «Свобода» | 4237 | 3183 |
| Ковалева Г. П. | «Оринино» | 4109 | 3984 |
| Васильева З. Н. | «Оринино» | 4109 | 3984 |
| Сорокина Л. М. | «Герой» | 4058 | 3790 |
| Андреева Л. А. | «Герой» | 4058 | 3744 |
| Борисова Н. М. | «Герой» | 4018 | 4423 |
| Васильева Е. В. | «Герой» | 4018 | 4298 |
| Васильева Л. И. | «Ударник» | 3963 | 3876 |
| Димитриев В. И. | «Ударник» | 3963 | 3876 |
| Алексеева Л. П. | «Ударник» | 3921 | 3549 |
| Иванова З. Г. | «Ударник» | 3921 | 3549 |
| Трофимова В. Г. | «Ударник» | 3910 | 3774 |
| Иванова Г. А. | Суворов яч. хис. | 3854 | 3989 |
| Филиппова Т. Н. | Суворов яч. хис. | 3854 | 3989 |
| Макарова В. В. | Суворов яч. хис. | 3854 | 3791 |
| Семенова З. М. | Ильич яч. хис. | 3745 | 3410 |
| Иванова Ю. А. | Ильич яч. хис. | 3726 | 3241 |
| Журавлева Н. Е. | Суворов яч. хис. | 3723 | 3892 |
| Антонова Ф. Ю. | Суворов яч. хис. | 3723 | 3892 |
| Печкова В. Н. | Суворов яч. хис. | 3723 | 3780 |
| Иванова И. А. | «Оринино» | 3700 | 3563 |
| Кожевникова Н. В. | «Оринино» | 3700 | 3563 |

### Мӑйракаллӑ шултра выльӑх самӑртассипе

**Колонкӑсенче: 1. Выльӑх пӑхакансем. 2. Хуҫалӑхсем. 3. Кӑҫал талӑкра вӑтамран ӳт хушнӑ. 4. Пӗлтӗрхи кӑтарту (грампа).**

| | | | |
|---|---|---|---|
| Иванов В. Н. | «Герой» | 1153 | 796 |
| Федотов Н. С. | «Ударник» | 966 | – |
| Ботникова Р. В. | «Оринино» | 855 | – |
| Толстов И. Г. | «Восток» | 798 | 769 |

### Сысна самӑртассипе

**Колонкӑсенче: 1. Сысна пӑхакансем. 2. Хуҫалӑхсем. 3. Кӑҫал талӑкра вӑтамран ӳт хушнӑ. 4. Пӗлтӗрхи кӑтарту (грампа).**

| | | | |
|---|---|---|---|
| Филиппова А. В. | Суворов яч. хис. | 872 | 540 |
| Михайлова Н. З. | Суворов яч. хис. | 872 | 540 |
| Морозова Л. Ф. | «Оринино» | 563 | 557 |
| Иванова В. Г. | «Восток» | 542 | 556 |

### Чӑх-чӗп пӑхассипе (пӗр чӑх пуҫне ҫӑмарта илнӗ)

**Колонкӑсенче: 1. Чӑх-чӗп пӑхакансем. 2. Хуҫалӑхсем. 3. Кӑҫал ҫӑмарта илнӗ. 4. Пӗлтӗрхи кӑтарту (штукпа).**

| | | | |
|---|---|---|---|
| Любимова С. В. | «Моргаушская» | 249 | 244 |

### Лаша пӑхассипе (тиха илнӗ)

**Колонкӑсенче: 1. Лаша пӑхакансем. 2. Хуҫалӑхсем. 3. Кӑҫал тиха илнӗ. 4. Пӗлтӗрхи кӑтарту (пуҫпа).**

| | | | |
|---|---|---|---|
| Нодыкова А. К. | «Свобода» | 7 | 15 |
| Иванов В. П. | «Восток» | 5 | 6 |
| Кириллов В. В. | «Оринино» | 3 | 3 |

Ылтӑн алӑллӑ

# Пултаруллӑ ял ӗҫченӗ

Хурт-хӑмӑра килти хушма хуҫалӑхра еплерех ӑнӑҫлӑ аталантармалла, хурт-хӑмӑр ҫемйин ӳсӗмӗ мӗнрен килет, вӗллерен тухса каякан хуртсене (ройсене) епле тытмалла? Вӗлле хурчӗсемпе ҫыхӑннӑ ҫак тата ытти нумай ыйтусем ҫине иртнӗ ӗмӗрти 50-мӗш ҫулсем вӗҫӗнче Етӗрнери механизаци училищинчен вӗренсе тухса механизатор свидетельствине алла илсе ҫӗр ӗҫне кӳлӗннӗ, каярахпа Шупашкарти троллейбус управленийӗнче (1965-2005 ҫулсем) слесарьте вӑй хунӑ, сентябрӗн 22-мӗшӗнче 71 ҫул тултарнӑ Тимофей Тимофеевич Тимофеев ҫӗрле тӑратсан та татти-сыпписӗр каласа парайрать. Хурт-хӑмӑрпа ӗҫлес ӗҫе ҫынсене вӗрентессине те ветеран айкине хӑвармасть.

Етӗрне районӗнчи Хурамалӑх ялӗнче ҫуралса ӳснӗ Тимофей Тимофеевичӑн салтака кайиччен колхозри утарҫӑна пулӑшаканӗ пулса ӗҫлеме тӳр килнӗ. Аслӑ юлташӗнчен пархатарлӑ утарҫӑ ӗҫӗн малтанхи вӑрттӑнлӑхӗсене алла илни троллейбус управленийӗнче ӗҫленӗ чухне те, пирӗн районти Кусӑкӑн ялӗнче пурӑнмалли кил-ҫурт ҫавӑрсан та ытлашши пулман. Сиенлӗ йӑласенчен (эрехсӑра) тата усал сӑмахсенчен айккинче тӑракан арҫынна хӑйне те паян вӗлле хурчӗпе танлаштарма пулать. Кун пек ҫынсем сахал, анчах пирӗн хушӑра пур вӗсем... Вӗсемпе пирӗн мухтанмалла, вӗсене ҫамрӑксен тӗслӗхне тӑратмалла.

Эпир ҫитнӗ чух Тимофей Тимофеевич черет ҫитнипе Кусӑкӑн ҫумӗнчи улӑхра ялти ӗнесен кӗтӗвне пӑхатчӗ.

– Ӗҫлемесӗр май килмест. Ялта вӗлле хурчӗ те, выльӑх-чӗрлӗхӗ те, тислӗкӗ те, пахча ҫимӗҫӗ те, вӗсенчен хатӗрленӗ продуктсем те кирлӗ. Тӗрӗсех калать Раҫҫей Президенчӗ ҫӗр ӗҫченӗ тӗнчери экономика кризисне хатӗр пулни палӑрчӗ тесе. Алӑ усма хӑнӑхман ял ҫынни ҫулленех хӑйне валли аш-пӑш, пахча ҫимӗҫ, улма-ҫырла т. ыт. те туса илет. Ытлашшине сутса укҫа-тенкӗ тӑвать, пӳрт-ҫурт ҫавӑрать, ача-пӑча ӳстерет, анчах йывӑрлӑхсене парӑнмасть. Эпир те мӑшӑрампа иксӗмӗр ҫак ҫула суйласа илтӗмӗр. Паян хулари хӗтлӗ хваттерте пурӑнманнишӗн пӗрре те кулянмастпӑр, – терӗ юлташне вылӑхсене пӗр хушӑ хӑйӗнсӗрех пӑхма ыйтса пирӗн машинӑна кӗрсе ларнӑ май манӑн ҫӗнӗ пӗлӗшӗм.

Арҫын кӑмӑлӗ, вӑл хӑй ӗҫне чунӗпе парӑнни пӗрремӗш утӑмрах курӑнчӗ. Акӑ ҫӑмӑл автомашина ялти ытти ҫуртсенчен нимӗнле кӑпӑрлӑхпа та палӑрса тӑман кил умӗнче чарӑнчӗ. Пӗчӗк йытӑ та кил хуҫипе пӗрле килнӗ палламан ҫынсене хӳрине вылятса ҫеҫ кӗтсе илчӗ.

– Унран ан шикленӗр. Ырӑ шухӑшлӑ ҫынсене ҫыртма мар, вӗрмест те вӑл. Ҫапла вӑл йытӑ чунӗ: пурне те сисет, йӑлтах ӑнланать, – тесе пахчана йыхравларӗ кил хуҫи.

Пахчана кӗрсессӗнех Т. Тимофеевӑн ӗҫченлӗхӗ куҫ умне пулчӗ: пӗр тӑваткал метр ҫӗр те пушӑ выртмасть. Ҫинеҫинех улмуҫҫисем, грушӑсем, виноградсем, ҫырла тӗммисем тата вӗсем хушшинчи вӗллесем. Кӑшт маларах иртсен, пушаннӑ йӑрансем, теплицӑсем...

– Ҫамрӑксене ӗҫрен ан хӑрӑр тетӗп те хамӑн тӗслӗхе илсе кӑтартатӑп. Ачалӑхрах утарҫӑ пулӑшаканӗ пулса ӗҫлени манӑн пӗтӗм пурнӑҫӑн шӑнӑрӗ пулса тӑчӗ. Шупашкарти троллейбус управленийӗнче ӗҫленӗ чух, 1971 ҫулхи ҫуркунне, хамӑн дача участокне вӗлле хурчӗн икӗ ҫемйине вырнаҫтартӑм. Вӑт ҫавӑнтанпа эпӗ утарҫӑ. Пурнӑҫри «ҫӗнӗ варкӑш» дачӑсене ухтару илсе ҫитерсен, Кусӑкӑн ялӗнче ҫурт илтӗм. Кунта вӗлле хурчӗсем тытма условисем питех те меллӗ: сывлӑшӗ усӑ, вӑрманӗсем пуян, халӑхӗ ырӑ кӑмӑллӑ, – калаҫӑва малалла тӑсрӗ арҫын пахча кӗтесӗсенче вырнаҫтарнӑ вӗллерен тухса каякан хуртсене (ройсене) тытмалли хатӗрсем ҫине тинкернӗ май.

Паян тивӗҫлӗ канури Тимофеевсен пахчинче 20 ытла вӗлле. Вӗсенчен кашнин патӗнчех пыл хурчӗ сӗрлет: пӗрисем сӗткен йӑтса килеҫҫӗ, теприсем пушатса каялла ҫула тухаҫҫӗ. Уйрӑм ҫемье мӗнле пыл панине Тимофей Тимофеевич пӗрре те тиркесе пӑхман. Турӑ мӗн парать – ҫавӑ пулать. Анчах утарҫӑ ӗҫне самантлӑха та хӑй еккипе яман.



– Мӑшӑр вӗлле хурчӗсен патӗнче тӑрмашни мана килӗшетчӗ те чылайччен пӑхса тӑраттӑм. Пыл сӗтел ҫине куркапа пырса ларнине ӗненместӗп. Уншӑн ҫанӑ тавӑрса ӗҫлемелле, питӗ асӑрханулла пулмалла, ҫӗнӗлӗхсене вӗренсех тӑмалла. Ҫакна Тимофей ӗмӗр тӑршшӗпех пултарчӗ, – терӗ пирӗн калаҫӑва хутшӑнса Тимофей Тимофеевичӑн мӑшӑрӗ, 2 ачапа 5 мӑнук асламӑшӗ-кукамӑшӗ Людмила Егоровна.

Механизатор пӗлӗвне илнӗ утарҫӑ ӑста пахчаҫӑ та. «Унсӑр епле-ха? Утарҫӑн йывӑҫ-курӑкпа та юратмалла, садпа та интересленмелле», – тет сӑмах ваклама ӳркенмен Т. Тимофеев. Ачалӑхра утарҫӑ пулӑшаканӗнче ӗҫленӗ чух аслӑ юлташӗ вӗрентнипе пӗрре улмуҫҫи сыпниех манӑн ҫӗнӗ пӗлӗшӗмӗре пахчаҫӑ юратӑвне тымарлантарнӑ. Унтанпа мӗн чуль улмуҫҫи сыпнӑ – тӗрӗс калама та ҫук. Юлашки ҫулсенче ҫӗннине тӑтӑшах ҫул паракан пахчаҫӑ виноград нумай ӳстерет, дыня, арбуз туса илет. Кунти ӑнӑҫлӑха ҫирӗплетекен пӗр ӳкерчӗк: кӑҫал Тимофей Тимофеевич пахчинче 7 килограмм таякан арбуз ҫитӗннӗ. Кӑна калама ҫеҫ ҫӑмӑл, анчах уншӑн мӗн чухлӗ ӗҫлемелле!

Т. Тимофеев хӑй ӳстернӗ ҫимӗҫсене хӗл валли те хӑех хатӗрлет. Кунта та унӑн хӑйӗн ӑсталӑхӗ.

– Хӗл хырӑмӗ тутӑ пултӑр тесен кама шанмалла? Никама та. Чылай хатӗрлев ӗҫсене те эпӗ хамах тӑватӑп. Пан улминчен сӗткен кӑларатӑп, помидортан сӗткен тӑватӑп, хӑяр тӑварлатӑп т. ыт. те. Пахча ҫимӗҫ ӳстернӗ чух тӗрлӗ чир-чӗрпе кӗрешессине те хамӑн тивӗҫ тесе шутлатӑп. Акӑ ҫулла помидорсене фитофторозран 3 хутчен хӳтӗлерӗм. Тӑрӑшулӑха кура – продуктивлӑх та. Иртнӗ ҫу кунӗсенче пахча ҫимӗҫ валли хамӑр вӑйпах нӳхреп турӑмӑр, – строительство ыйтӑвӗсем ҫине куҫрӗ калас сӑмаха вӑрттӑнлӑхра тытасси йӑлара пулман ветеран. Кунта вара килти хушма хуҫалӑхра кӑткӑ пек ӗҫлекен ветеран вӑрттӑнлӑхсене ҫынсемпе пайланинчен те тӗлӗнмелли ҫук.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сӑн ӳкерчӗкӗ.**